# Капкăн


— Шефсем килђĕç!!!
— Воспоти! Виç çул пит хă-вăрт иртсе карĕçке.
19-мĕш №

# Мĕн кирлĕ.

Укçукăн çĕвĕ çĕлемелле. Хулара тăракан ывăлĕ ăна кутĕнеç тесе çитсă кĕпе илсе йанă. Кĕпелĕх илсе йама пĕлнĕ—çиппине мантарса хăварнă. Укçине нимпе çĕлеме аптăраť. Килти хулăм çиппе çĕлеймĕн çитсă кĕпене.

Тухаť те утаť Ђăваш-Сурăм копператтивне.

— Унта пулаканђĕ.

Йалтан тухсанах Трахвин арăмне хăваласа çитет.

— Ăçта кайан?

— Ес ăçта кайан, çавăнта кайатăп, тет кулкаласа Трахвин арăмĕ, пĕђен кайиђен иккĕн кайма аван пулнипе савăнса. Иулташпа калаçса кайсан çул кĕске пулаť вăл.

— Хамăр йалта копператтив çукки темрен те нуша. Ма уçмаççĕши çавна—тарăхса хускатса йараť Укçине, —ытти йал, йал пекех, пирĕн... çавна та тăваймаççĕ.

— Ан кала та тархасшăн—аллине сулаť Трахвин арăмĕ. Çук йапалашăн та Ђăваш-Сурăмне ђупас пулаť.

— Нуша мари, нуша-а! Мĕн илме кайатăн?

— Çип кирлĕ, кĕпе çĕлемелле. Ес мĕскер тата?

— Супăђ кирлĕ. Кĕпесем хуралђĕç. Супăђсăр тасатма та çук.

Лавккара тăват-пилĕк хĕрарăм пĕр старик.

Копператтив прикашђĕкĕ вырăс ађи Петĕр Винократăв ђăвашла пĕр сăмах пĕлмест. Хĕрарăмсем пуçне тытса кăтартаççĕ, хăшĕ аллине тăскаласа кăтартаť, лешĕ куçне мăђă-мăђă çеç хупкаласа тăраť.

Илни итђĕ, илменни ним илмесĕрех пуçне сулласа тухса кайрĕ.

— Ваđука илсе килĕпха, шкулта вĕренет вăл манăн, калаçкалама пĕлкелет.

Çынсем лавккара панă йапалисене хыпашласа, шăршласа пăхаççĕ, хăшĕ ђĕлхипе çулласа пăхма та ўркенмест.

— Чаво надо?—тесе пырса тăђĕ Винократăв Укçук Трахвин арăмĕ патне. —Выбирай чаво надо!

— Есĕ «ђаво натине» пăрахха. Çип илсе пар мана, çип, кĕпе çĕлеме çип кирлĕ—аллине тăскалаť Укçине.

— Не понимаю.

— Çип вот етăккий, вă-ăрăм тутиçути.

— Хм! Ничего не понимаю. Çиђкă штоли?—тет вăл пĕр пĕђĕк коропккă парса.

— Çу-ук, ку мар. Вот етăккий... вăăрăм. Кĕпе çĕлемелли.

— Черт знает что такое, за десять лет по русски не научились, беда с аппайками!

Укçук аптăраť. Çамкине сăтăркалаť. Çипе вырăсла мĕнле каланине пĕрре илтнĕђĕ вăл, анђах халь нийепле те астуса илеймест.

— Мыло чтоль?—пырса хураť ун патне Винократăв супăђ. Эта штоль?

— Çу-у-ук, ку мар. Кĕпене çĕлемелха ман, çумалла мар.

— А-а! марли может быть. Марли нет у нас. А тебе чаво?—ыйтаť вăл супăђ тытса тăракан Трахвин арăмне. Вăл ăна аллинђен ĕçерестĕн мар.

— Çакă кирлĕ мана, супăђ кирлĕђĕ.

Хаклашма тытăнђĕç. Пўрнепе кăтарткаласа, тавлашсан-тавлашсан килĕшрĕç хакне.

— Ну таврăнар пуђ?—тет Трахвин арăмĕ сăмси айĕнђе темĕскер пăшăлтатса тăракан Укçинене.

Винократăв ытти çынсем патне кайса тăђĕ, еспeрантто ђĕлхипе калаçкалаççĕ.

— Ђаво надо, ето штоль?—тени йан кайаť лавккара. Ђăваш хĕрарăмĕсем пăшăлтатаççĕ пĕр-пĕринпе, каллĕ-маллĕ пăхкалаççĕ... ним те тума çук.

— Мĕнле ыйтас, мĕнле калађĕç-ха çавна?—тарăхаť Укçине.

— Пĕлместĕп, манран ан ыйт, вырăсла пĕр сăмах та пĕлместĕп, тет Трахвин арăмĕ.

Çав вăхăтра лавккана пĕр çамрăк ађа ђупса кĕрет.

— Каранташ йесђ?

— Есть.

Вăл каранташне çаваркаласа пăхса тăнă çĕре Укçук васкаса пырса тăђĕ.

— Çип ыйтса парха, тархасшăн. Калама пĕлместĕп.

— Е-е х, есĕ те çав. Нитки йесђ?—Кăшкăраť шкул ађи.—Шпулĕђнăй нитки?

— Есть. Пырса тыттараť Винократăв. Укçук ађана тав туса çип хакне

# Йаçлĕ хупăннă хыççăн.

Ырашпулăх йалĕнҫе (Куславкка р.) аҫа йаçлĕне пăхакан Ноттă аҫасен çăнăхне вăрласа йулнă.



**Ноттă: Ку çăнăха çапла валеçес: пĕр пайĕ—хама пултăр йаçлĕне пăхнăшăн, тепĕр пайĕ каллех хама çăнăхне вăрланăшăн, виçĕмĕш пайĕ татах хама—ҫейе пулнăшăн, ытти йултăр халăха.**

тӳлет те Трахвин арăмĕпе тухса кайаççĕ.

— Çак лавккана килсен тĕнке тухаť вара. Ҫăвашран тупаймаççĕ курăнаť. Е-е-х!

Те вырăсла калаçма пĕлментен, те урăх сăлтавпа, Винокрагăв ҫăвашсене йуратмасť.

Пĕрре çапла копператтива пулă илсе килҫĕç. Илес текен çынсем нумай пуçтарăннă. Ҫерет тем тăршшех тăсăлнă. Майрасем пыраççĕ те, Винократăв вĕсене «пошалуйстă» текелесе ҫеретсĕрех виçсе парса йараť. Ҫăваш арăмĕсене «куда лезете», тесе кăшкăрса пăрахаť.

Копператтив ҫленĕсене тавар нурмăпа çеç параť, ытти çынсене (хăйĕн паллакан çынсем пулас) нормăсăрах, мĕнҫул илес тенĕ, çавăн ҫул виçсе парса йараť.

Тепĕрре тата ҫленсене салатма хура тавар килнĕ. Унта та ҫленсене 5-шер меттăр, yттисене мĕнҫул илес тенĕ çавăн ҫул салатнă.

«Хăш ҫух тавар хакне ӳстерсе сутма та хăрамасť. Пĕрре пĕр çынтан 7 тенкĕ те 6 пус вырăнне, 8 тенкĕ те 12 пус илсе йулнă» тесе çыраť йал çынни.

Аҫи пултармалла. Ахалтен «Капкăна» çакланмасť ĕнтĕ вăл. Сирĕн урăх прикашҫăк шырамалла пулаť. Тата сире „ҫаво на тă“?

И—ИН.

# Шалт аптрарӑм.

Хаҫхи саманара, хӑтасем, пурте пӗр пӗрине тиркессӗ те, хӑшӗ ҫӑн калавине, хӑшӗ сӑвине пӗлме хӗн... Паркун пӗре ӗҫсер аптранӑ хушӑра йал пуххине кайса лартӑм. Тӗлӗнсе вилеттӗм вара ҫав пухура—ытла та тӑрлавсӑрланса кайнӑ мӗн хаҫхи ҫынсем. Хӑвӑрах шутлӑрха ӗнтӗ, хӑтасем, мӗн майӗ пултӑр вӑл—пӗр пӗрине кӗҫ-вӗҫ тытса ӑшалас пек йатлаҫаҫҫӗ вӗт пухура.

Пулӑшком теҫҫӗ-и ҫав... Ҫав пулӑшком ҫинҫен калаҫма тапратрӗҫ те:

— Епӗ халӗ пулӑшкомра ӗҫлетӗп, ҫавӑнпа пулӑшком пуҫлӑхӗ ҫинҫен мӗн кирлӗ, ҫавна каласа кӑтартма пултаратӑп... Вӑл питӗ ӗҫме йуратакан ҫын, епӗ хамах унпа пӗрле темиҫе хут тӑрӑнса кайиҫҫен ӗҫнӗ. Ӑна нийепле те пре[з]ҫетаттелте хӑварма йурамасӑ, тет Максӑм Йаванӗ.

— Йаван Максӑмӗ, краштӑнсем, ман ҫинҫен йури ӗлӗклет. Епӗ никҫан та тӑрӑнса кайиҫҫен ӗҫмен. Йавана хӑйне пулӑшком ҫленӗнҫен кӑлармалла, мӗншӗн тесен вӑл хӑйне кура мар, ҫынсен арӑмӗсене ҫулӑхма йуратать. Епӗ ӑна хам арӑм ҫумне ҫулӑхнине те вумай асӑрханӑ. Пӑркун пӗре хӑлха ҫиккинҫен те тӑхӑнтартса йамалла пулҫӗ. Вӑл халӗ ҫавӑнпа мана кураймасӑ, тет пулӑшком пуҫлӑхӗ.

— Йулташсем, есӗр самокриттӗк ӗҫне ӑнланаймасӑр хирӗҫеттӗр. Самокриттӗк тени хӑвӑра хӑвӑр йатлаҫмаллине пӗлтерет. Есӗр кун пек пӗр пӗрине тиркеме тытӑнсан, мана та тиркеме шутлӑҫ... Апла йурамасӑ, тесе аран тытса ҫарҫӗ хайхискерсене йалӗҫтӑвком пуҫлӑхӗ.

Йалӗҫтӑвком каланипе хам та килӗштертӗм вара. Ҫӑнах та мӗн йӗрки пулать ха апла пур йӗпе сӑмсасем пуҫлӑха тиркеме пуҫласан. Вӑл халӑх ӗҫӗ ҫинҫе анҫах мар, хамӑр килйышра та ҫавах. Сӑмахран акӑ каллех ман аҫасем ҫине ҫитер. Пӑркунах каларӑм сире, хаҫхи аҫапӑҫа ҫын ӗрегӗнҫен тухвӑ тесе. Вӑл тӗрӗсех...

Ӗлӗк пулсан, аҫа тени, ашшӗ амӗш мӗн хушнӑ ҫавна тӑвать. Нихӑҫан хирӗҫле сӑмах хушни ҫук. Халӗ мӗн хӑтланаҫҫӗ?. Ним калама та аптратӑп, хӑтасем, хам та...

— Атте, атте, есӗ ма ҫӗлӗм туртма пӑрахмастӑн, ҫӗлӗм туртни ҫӗрене ҫӗртет вӗт, тесе йӑлӑхтарҫӗ ӗнтӗ пӗр йӗпе сӑмси.

Вӑт мур аҫи, кам вӗрентнӗши ӑна ашшӗне ҫавӑн пек ӑс вӗрентме.,. Мӗн епӗ, хаҫ каланӑ пек, вӗсен укҫипе табак илетӗпи мӗн.. Хам ӗҫлесе тупнӑ укҫана хӑть те тӳрех тапак выранне тураса туртам, вӗсене мӗн ӗҫ... Еккейа!..

Пӑркун тата кумсамулсемпе хутшӑнса ҫӳрекен Хӗлӗп йатлӑ аҫа кӗрӳсемпе ерех ӗҫсе ларнӑ ҫӗре пыҫӗ те:

— Атте, тет, атте, пайанхи хаҫат ҫинҫе ерех ӗҫме пӑрахмалла тесе ҫырнӑ. Ерехпе укҫа пӗтериҫҫен тавай луҫҫӑ плук илер, тесе лӗпӗртетсе хуҫӗ... Алӑ айӗнҫе пушӑ пулнӑ пулсан, аван ӑшалаттӑм та,аҫа ҫапманскерне... а-ӑх!..

Кӗрӳсем умӗнҫе ҫиперех намӑс кӑтартса хуҫӗ вӗт. Хӗлӗп лепӗртетсе хӑварнӑ хыҫҫӑнах, кӗрӳсем сӗтел хушшинҫен тухрӗҫ те:

— Ну, хунҫӑкам, ӑсатса йаратӑн пулӗ пире, ӗҫнӗ-ҫинӗшӗн тав сире, тесе хуҫӗҫ...

Ним каласа та ҫураҫмарӗҫ вӗт хӑнасем. Хӗлӗпе пулах хурӑнташсӑр тӑрса йултӑм ӗнтӗ.. Ӑ-ӑх ӑна, ӑна, ӑна!.. Кӗрӳсем кайсан та Хӗлӗп ерех выранне плук илес тесе минтретме пӑрахмарӗ... Шалт аптрарӑм йӗркерен тухвӑ аҫапа..

Пӗрик ернерен, ним тума пӗлмесӗр:

— Ну плук тӑк плук пултӑр, акӑ хӑвӑр алӑпа пухӑр еппин пӗр плуклӑх, терӗм хамах тырӑ сутса илнӗ 10 тенкӗ укҫана Хӗлӗпе парса. Кун хыҫҫӑн татах тепӗр 15 тенкӗ тупса патӑм. Кӗҫ копператтив ҫаптине леҫме Канаша каймалла пулҫӗ.

— Ну, атте, епӗ леш укҫисемпе плук илсе килетӗп, терӗ хайхи Хӗлӗп Канаша кайас умӗн.

— Ара, илсе килес пулать ӗнтӗ ӑна, терӗм хам та.

Укҫана ҫикрӗ те Канаша тухса карӗ.

Хӗлӗп плук илсе килет тесе, ытти аҫисем тепӗр куннех сарайӗнҫе плук лартмалли выранӗсем ирӗклетрӗҫ. Хӑйсем хӗпӗртенипе кувӗн-ҫӗрӗн плук ҫинҫен калаҫаҫҫӗ...

Анҫах пӗр талӑк кӗтетпӗр, икӗ та-

**Арăмĕ çине шалăпă пама пынă çын.**



— Кунта пуђ хĕрарăм пайĕ?

— Кунтаçке. Ай-уй! Ма капла есĕ камитла тумланнă?

— Хĕрарăм пайне хĕрарăмла тумланмасăр кĕртмеççĕ терĕ те арăм.

---

лăк... пирĕн Хĕлĕп темшĕн тавăрнмаст̆.

— Мĕнле, ку Хĕлĕпе çаратса карĕçши мĕн, тесе куђанат̆ амĕшĕ. Ађасем те хуйха ўкрĕç...

Виççĕмĕш кунне, каçхи апат çисе ларнă ђух тин çитрĕ хайхи Хĕлĕп. Пăхатпăр—урапи çинђе плук таврашĕ çук...

Плук ăçта, пиђђе, плук, терĕç ађасем сĕтел хушшинђенех Хĕлĕп пагне тухса.

— Пл... пл... плуксем унта сутмаççĕ... тесе тăрат̆ Хĕлĕп, темшĕн тытăнђăкланса.

— Укçи хăвăнпа пĕрлехи хăт̆, терĕм епĕ ђĕре тем усалла сиснипе.

— У...у..: укçиве... Лешкасри Мĕкĕтесемпе пĕрле ĕçсе... ĕçсе йатăмăр, тесе хуђĕ çĕр çăтман ађи мана хирĕç. Вăт мĕн туса хуђĕ вăл мур пуçĕ... Итле ăна ађапăђа сăмаххине!.., А-ах... Тĕрĕс калат̆ йалĕçтăвком пуçлăхĕ--мана тиркеме не пăлакатсă тесе.

РОНИ.

# Сăмакунпа авăракан арман.

— Ну, пултаратпăр та çавă, хамăр та...

— Мĕн вара, мĕн?

— Матур етемсен ăс çитет çав. Пĕтĕм тĕнђе умĕнђе асăнмалăх ĕç турăмăр.

— Тулккипе кала есĕ, мĕнле ĕç пулнă, ăçта?

— Хамăр йалта, Ђăн-Кассинђех... Иехрем хуçасене асăнађђенех пире, Ђăнкассисене, йалĕпех аса илмелле.

Иехрем хуçан ўгне çеç ђасовой айне çпирт ăшне хунă, тет. Елĕр çпиртпа арман авăртатпăр...

— Ĕнттереслĕ апла, мĕнле пулђĕха, вĕревме çуки?

— Мĕн вĕревмелли ăна, тыт та ту. Пулђĕ те. Куславкка районĕнђе (Ђăваш р.) Ђăвкасси пек йалĕ темĕн ђухлех. Анђах ĕçне ĕçлессе матуртарах ĕçлетпĕр вара...

Иал халăхĕн шыв арманĕ пурђђĕ. Пĕвине пĕвелемен... Иапăхнă. Çав армана Волоти Рошкова сутрăмăр. Арманĕ ђăн-ђăнах лайăх авăрнине ĕненмест.

— Çук, лайăх ђупат̆, тесе тавлашса кайрăмăр. Ăна ерехпе авăртма та пирĕн вăй çитет, терĕмĕр.

Ђăнах пултартăмăр — 60 тенкĕлĕх сăмакун йатăмăр та, шыв арманĕн урапи çаврăнах пуçларĕ.

Платтун Микули йатлă комсомолĕс çак технĕккă пултаруллăхĕшĕн каççах кайнă. Саркалана-саркалана йурра туртат̆...

Иалĕçтăвком ђленĕсем те йулах памарĕç. Хăйсен Иенĕш шывĕ урлă кĕперне ишĕлсе аннăскерне, тўрлетессе мансах, ерехпе авăракан арман патнелле ђупнă... 3—4-ăн харăс, сĕвĕрĕлсе кайађђен тесе, шыв арманĕн урапи айне лапђăннă, ђĕлхисемпе çулласа типĕтсе выртаççĕ. Ах, илемлĕçке!.. Ах, ытарма çук.

Пĕт-пĕгĕм пулнă Ђăн-касси хронĕкки те, каçса кайсах каласа кăгартрĕ йулташне ку ђаплă ĕç çинђен.

Тĕвђипех хыпарласђĕ 80 кратăслă (40-кратăслипе çырлахмĕç маттурсем) мухмăр метађ çакса йарас Ђăн-касси халăх çамки çине.

УРХАМАХ.

## Сывлăшри пуштă.

Иулашки вăхăтра пирĕн Ҫăваш республикĕнҫи уҫрештенисем те сывлăшри пуштă ҫинҫен шухăшла пуҫларĕҫ.

Шупашкарти хăшпĕр уҫрештени пуҫлăхĕсем, те тĕрлĕ хаҫатсем ҫинҫе вуланипе, те ҫывăрнă ҫухне тĕлĕкре курнипе, хаҫхи вăхăтра ҫав сывлăшри пуштă ҫине шанса, хутсен ҫӳрес вăхăҫĕсене кĕскете пуҫларĕҫ. Вĕсен шухăшĕпе пайан Шупашкартан сывлăшри пуштă вĕҫсе тухмалла та, ҫав кунах Аслăпатĕрйелне ҫитмелле. Аслăпатĕрйелĕнҫе ҫав сывлăшри пуштă хутсене уҫрештенисене парса хăварат те, кайалла кайат. Тепĕр кунне ҫав пуштă килнĕ ҫĕре Аслăпатĕрйелĕнҫе тĕрлĕ хутсене хатĕрлесе хураҫҫĕ те, сывлăшри пуштă килсен, Шупашкара кайалла йараҫҫĕ. Ҫапла малашне Шупашкарпа Аслăпатĕрйел РĔК-ĕ 3—4 кун хушшинҫе ĕҫсене туса та пĕтереҫҫĕ.

Пит те аванҫке кун пек пулсан, вара хайхи волоккиттă текен йапала та сывлăш тăрăх ҫеҫ вĕҫсе ҫӳрĕҫҫĕ.

Ҫăваш Ĕҫ Комиссариатĕнҫи консуҫтант Суворăв ҫакăн пек ҫырат:

В Батыревский райисполком.

3 сентября с. г. в 2 час. в здании ЧНКТ назначается заседание примкамеры по делу Возникшего конфликта на почве не выдачи выход пособия и за отпуск б/секр. П—Биншик. с/совета Макову..

Сообщая изложеное НКТ просит Вас к указанному времени выслать Вашего представителя, снабдив его документом дающее право самостоятельного решения указаннаго выше конфликта.

Консультант ЧНКТ СУВОРОВ·
27/VIII 28 г. № 12269.

Конверт тăрăх, Шупашкарти пуштăран авкустăн 29-мĕшĕнҫе тухнă, Патĕрйел РĔК-не авкустăн 3-мĕшĕнҫе персе ҫитнĕ. Аташнă пулмалла. Сывлăш пуштине лекеймен пулас.

Ҫĕрĕҫ Комиссариаҫĕ авкустăн 24-мĕшĕнҫе тата 7905/2 номĕрлă хута Аслăпатĕрйел РĔК-не йарса, ҫапла хушат: „Отчот представить ни в коем случае не позже 1-го сентября с/г.“ Аслăпатĕрйел РĔК-не вăл хут ҫенҫапĕрĕн 3-мĕшĕнҫе персе ҫитет. (Шупашкарти пуштăран авкустăн 26-мĕшĕнҫе тухнă).

Шухăшĕсем сывлăшра ҫӳрекен ҫынсем сроҫнă ҫырусене сывлăшри пуштăпа ҫӳретеҫҫĕ. Сывлăшри пуштăпа ҫӳретме иртерех халĕ, тимĕр шапа илсе ҫӳренипе те пурăнмалла. Ф Р у м.

## Виҫĕ пуслăх комиҫҫи.

Шаккăл йалĕнҫи (Шупашкар р.) тырăпа сутă тăвакан Ухванеҫ Ĕлекҫи ҫине налок кăҫал лайăхах ĕнсене хырмаллăх хурса лартсан, йатă пулли пек вĕтĕлтетме тапратрĕ. Айтарух, мĕн тăвасах...

— Тыррипе сутă тăвасси тукаларăм та... Тупăшне налок тӳлесех сайа йамалла мар вĕт... Ай-уй, мĕн тăвасах...

Ҫĕр ҫывăрмасăр пуҫне ҫĕмĕрет Ухванеҫ Елекҫи, аптранипе ĕнсине хыҫҫа хĕпхĕрлĕ туса йаҫĕ. Тарăхнипе, ҫывăрнă ҫухнех, вăрансан маткине пустуйех айăккинҫен пантлаттарса илет...

— Ес те пулин, шутлаха, есремет!

Тепĕр кăшт кун пирки шухăшласа ҫӳренĕ пулсан, тен пуҫĕ те ҫурăлса кайаҫҫĕ-те-и, анҫах Елекҫи шухăшласа илҫĕ...

— А а ааа... Тупрăм йапала! терĕ те, йалти налок уҫҫот комиҫҫинелле вĕҫтерҫĕ...

Елекҫи калаҫма ăста. Такама та ҫавăрĕ! Тапратрĕ йăпăлтатма.

— Иăпăл-йăпăл, йăпăл-йăпăл... Нихăҫан манмăп, кĕренкке туртакан ҫурта лартăп, май килсен упалениҫҫен ĕҫтерĕп..

Уҫҫот комиҫҫин ҫемҫе ҫĕреллĕ ҫленĕсем ҫĕлеех кайрĕҫ... Шел, мĕскĕнсене! Нумай шутласа мĕн тăмасăрах ҫакăн пек хут ҫырса та тытараҫҫĕ:

«Дано настоящую справку Афанасеву в том, что он действидельно покупал хлеба не для спекуляцию, а для продовольствие и для фуражей. Настоящую справку выдано для предоставлени Чебрайон. налоговую комисси, что и... т. ыт. те.

Иулашкинҫен хăйсен хушамаҫĕсене кукăртса хураҫҫĕ.

Ниҫҫово, магтур. Мĕн теттĕр есĕр, вулакансем? Ҫур ҫетвĕрт ерехле ҫакăн йышшисем Раҫҫейе сутаҫҫĕ вĕт, е?

Ҫаплах ҫав. Справкки те телейлĕ пулнă. Иалĕҫтăвком ҫыруҫин алливе ленкнĕ те, урлă «Препятствие для помещения на «Капкăн» не имеется» тесе ҫырса хунă.

Ав, хаҫ есĕр те вулаттăр. Тата, унпа пĕрле «шăтăк тăрăллă» уҫот комиҫҫин ҫленĕсенҫен кулаттăр...

Астăвăр, хăвăрăн комиҫҫи мĕнлерех?

Леон. Л.

# Ђаплӑ менелник.

Тулик-Хураскинҫе (Шуп. рай.) йӑлӗҫтӑвком ҫыруҫи Кретски хӑй менелникне вуламалли ҫуртра туса иртернӗ.



— Ђаплӑ саҫҫетанийе ўҫнӑ тесе шутлатӑп, Кунта йалӗҫтӑвкомран, уђитлӗсенђен, патрађкомран, тата ытти органисатсисенђен, менелник йађӗпе, саламлӑ сӑмах калас текенсем пур. Малтанхи сӑмаха, политпроҫвет уђрештенийӗсен йађӗпе, вуламалли ҫурт пуҫлӑхӗ Иеленӑ Шахмӑтӑвӑ каласшӑн.

Кашни тухас килмесренех тухса пыракан

# „Капкăн хаçачĕ"

ХАКĔ: „Капкăн" шурнал потписţĕкĕ маррисемшĕн 5 пус, потписţĕксемшĕн—0 пус, çын çырăнса илнине вулакансемшĕн 1 тенкĕ, ţемперленшĕн 100 тенкĕ—(хут пĕлменнисене сутмастпăр).

ПАЙАНХИ НУМĔРТЕ:



„Капкăн" хаçаţĕпе супăнţ ţăркама йурамасĭ.

## РАТИО-ХЫПАРСЕМ.

### Хĕрлĕ улахсем тума пуçланă.

Пиркасси. Окĭапĕр пуçламĕшĕнţе хĕрлĕ улах пулса иртрĕ. Пит нумай пынă халăх хĕрлĕ улаха. Тепĕр кунне йунĕсемпех тухтăра кайакансем нумай пулţĕç.

### Кашкăрсем хăракан йал.

Кăшавăш. Иртнĕ тунтикун 5 кашкăр йала кĕме шухăш тытнă. Анţах йалта самоконщţиксем пуррине пĕлсен, йалтан тарнă. Самоконщţиксем çынсенţен çиţшер тир сĕвеççĕ, пирĕн тирĕ те пĕрер анţах, тенĕ вĕсем.

### Окĭапĕр праçникне хатĕрленеççĕ.

### Самокриттĕк кампани.

Тунтикасси. Самокриттĕк кампани аван иртет. Çитес Пукравра, ĕçнĕ хыççăн, вăл кампанийе татах аванлатма шухăшлаççĕ.

### Самокриттĕк конферентсийĕ.

Шупашкар. Иванов телопроисвотиттĕл хăйĕн шухăшĕсене конферентсийе пухаĭ ге, уţрештенири йĕркесĕрлĕхсем çинţен каласа параĭ (тўшек çинţе выртнă ţух). Самокриттĕк тунăшăн Иванова хĕсĕрлекенсем пулман.

### Килес çулхи мотă.

Çенйал. Çитес çул ţăваш хĕрĕсем çўллĕ кĕлĕллĕ пушмаксем тăхăвма шухăшлаççĕ. Кĕлин çўл-

### Йалхуçалăх выстăвккинţе.



— Сирĕн йалта ăратлă сысна пури?
— Пур. Претçетаттĕл пирĕн сысна.

## Йалхуçалăх пайĕ.

### Йалхуçалăх хатĕрĕсене тĕрĕслесе тухни.

Сухапуç. Платникăн пуртти çук, сухапуçĕн пуçĕ çук, теççĕ вĕреннĕ çынсем. Сухапуçĕн ţăнах та, Иекоркинă йалĕнţи пулăшком претçетаттĕлĕн пек, пуçĕ çук,—лайăх ĕçлемест. „Капкăн" таçанах çаклатса илесшĕнţĕ те ăна, анţах шухăшласа тăраĭха, тахăшне çаклатмалла малтан—те сухапуçне, те хуçине.

терме лайăх хатĕрленеççĕ. Октăпĕр прачникĕ кун копператси йалавне çÿллĕ тытас тесе, йалавне тытма çÿллĕрех çынна суйласа хунă.

### Çунса кайнă.

Шемшеш. Шемшешри Иăван шăрпăкпа самоконккă тивертсе пăхнă. Самоконкки пĕтĕмпех çунса кайнă. Страхховккă илме шутламасť.

сене хуçса инвалит пулнă хĕрсем вађђи пенççи хатĕрлемелле.

### Çĕнĕ тупкăвçă.

№-хула. Ђикмеккăв акроном çĕнĕ йапала шухăшласа кăларнă. Ђăваш çĕмелĕсенђе, ђăваш ампарĕсенђе пурнакан шăшисем пулхăр ăраттинђен, тет. Вăл ăратта лайăхлатсан, пирĕн шăшисене йут патшалăх çыннисем те илеççĕ, тет (пуринђен ытла Анклийе каймалла, тет).

вăç шăлăлли, тимĕр шăлăлли. Тимĕр шăлăллине Шупашкарти шăл тухтăрĕсем туман, çавăнпа вăл çирĕп, ђас тухса ÿкмест. Иăвăç шăлăлли ĕçлемест вара.. Сÿрепе пуç турама йурамасť.

Кĕреçе. Тырă сывăрмалли кĕреçене вĕреннĕ çынсем таксанах поминани кĕнеки çине кĕртмелле тăвасшăн. „Кĕреçе" йатлă коппер態ратив та пур, анђах ăна хăйне сывăрмалла. Кĕреçепе çăмарта çимеççĕ.

Кунтă. Тыр аквă ђухне кирлĕ пулакан савăт-сапа. Хăшпĕр ђухне çĕр упполномођђĕннăйсем унпа ерех ĕçеççĕ.

## Наукă пайĕ.

### Хĕвел улшăнни.

Иулашки вăхăтра хĕвел курăнма пăрахрĕ,--кунĕ кунĕпе пĕлĕт айĕнђен тухмасť. Вĕреннĕ çынсем çавăн çинђен те шухăшласа пăхнă. Вĕсем каланă тăрăх, хĕвел самокриттĕкран хăраса тухмасť.



Ђăпта. Ыйăх ђăпти мар.

**РИФМĂ** тыратăп сăвă вађђи. Тупса паракана конорар тÿлеместĕп. Атрĕс: Ађа сырăшĕ, Иванов.



Мухмăрла хурал сарайĕ.

## Ретаксийе килнĕ çыру.

### Тĕрĕслемелле.

Мĕн пирки капла пулнине тĕрĕслеме ыйтатăп. Пĕлтĕр октăпĕрĕн 10-мĕшĕнђе кун тăршшĕ 10 сехет та 53 минут пулнăђђĕ, кăçал та çаплах пулђĕ. Ăçта кунга кашни çулхи ÿсĕм! Тĕрĕслесе пăхмалла!

Атминистраттăр КУЛКИН.

## Писсаттĕлсем хушшинђе.

Писсаттĕлсем пинрен ирттеççĕ. Пĕр статистĕк шутласа кăларнă тăрăх, ђăвашла çыракан писсаттĕлсемпе поетсем пĕгĕмпе пинрен ирттеççĕ. Вĕсем çырнине вулакансем («Сунтал» потписђĕкĕсем) 900 çынна йахăн анђах. Вĕреннĕ çынсем каланă тăрăх, писсаттĕлсен хисепĕ малалла та кун пек ÿссе пырсан, вулакансен хисепĕ 5 çын анђах йулмалла (ретколлеки ђленĕсем).

Çĕнĕ поемă. Васли Хветуђĕ çĕнĕ поемă çырса пĕгерет. Мĕн çинђен çырнине хăй те пĕлмест, мĕншĕн тесен поеми сăвăллă пулаť.

### Самокриттĕк.

— Йыгта «Самокриттĕк» тесе йат пама йурати?

— Иыгти мĕнлескер? Çыртаканни пулсан--йураť, çыртманни пулсан—йурамасť.

## ĂС ПАНИ.

**Ыйту.** Ç... (уђрештени йатне темле кукăр-макăр çыркаласа кайнă та, тăнланмалла мар) уђрештенире ĕç хăвăрт (ђас) туса парĕçши мана?

Ответ. Ку ыйтува хирĕç икĕ тĕрлĕ калама пулаť: 1) 1963-мĕш çулта, 2) çÿремелле пулаť халĕ те, кирек-хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех.

**Ыйту.** Нойапĕр уйăхĕнђе аслати пулма пултараťи?

Ответ. Пултараť—РКИрен ревиçи пырсан.

## Сут пайĕ.

### Тасалăхшăн кĕрешнĕшĕн.

Копператтивра ĕçлекен Иванов тасалăх кампанинђе, тасалăхшăн кĕрешес тесе, сђот çинђен ђыхвăрсене çĕçĕпе хырса тасатнă. Çавăншăн ăна сут 5 çуллăх тĕрмене хупмалла тунă. Тасалăх комиссийĕ хăй йенђен Иванова хута кĕрсе тĕрмерен хăтарас тесе шухăшламан.

# Хĕритун.

— Пета ку арăмпа. Хĕрарăм—хĕрарăмах ĕнтĕ вăл, çавна та çавăрса илмен: кам хушнăха ăна ку вăхăтра çăмăлланма?! Ку пылдăкра мĕнле кайасха ун патне? Неушлĕ çавна та çавăрса илме пĕлмест. Ах, равноправи, теççĕ тата ахаль духне. Рас, çăмăлланмалли вăхăт çитсен, пĕр виçĕ уйăх та дăтма пултарайман йапала, мĕн равноправийĕ çинчен калаçмалли пур. Арçын ĕмĕр-ĕмĕр çăмăлланмасăр дăтма пултарать, хĕрарăм пур—патне çитсен те, пĕр виçĕ уйăх дăтма пултараймасть. А-ăх, равноправи!..

Шупашкарти удрештенисенчен пĕринче слушит тăвакан Хĕритун, килти арăмĕнчен çыру илнĕ хыççăн, хăйĕн пĕчик пÿлĕмĕнче каллĕ-маллĕ уткаласа вăрçса çÿрет. Дуспа сарнă урайĕ—вăнки-вăнки авăнать. Сĕтел çинчи дервилĕ—пыл сăра пек тăкăнать.

— Пушă мăй, пайтушки, Хĕритун! мĕн пулнă ара сана?.. тесе кăçкăрса ÿкрĕ Хĕритунăн хулари хура кусла, вăрăм арăмĕ, çав вăхăтра пÿлĕме пырса кĕрсе.

— Та, дорт воçми! арăмăн çăмăлланас вăхăт çитнĕ.

— Ара, мĕн ухмахланатăн ес, Хĕритун! Ăçтаха ман çăмăлланас вăхăт, халь пилĕк уйăх та тултарман вĕт.

— Санăн та çире пури?

— Тата ес кам çинчен?..

Ку сăмахсем хыççăн Хĕритунăн дĕри, хăрăк шанăк пекех, шартах хусăлдĕ. Пĕр арăмĕ—халь çăмăлланать, тепри—хатĕрленсе тăрать. Пуçа ăçта кайса дикес, вăт тамаша!

Хулари арăмĕпе Хĕритун пĕрлех пурăнман, йерçнĕ хушăра, кирлĕ ĕçсемпе çеç пĕр-пĕрин патне çÿренĕ. Çавăнпа та, халь те, хулари арăмĕ Хĕритун патĕнче нумайах лармарĕ, тухса уттардĕ хăйĕн килнелле. Анчах дĕре сисет пуль çав—макăрсах тухса карĕ.

Арăмсем çинчен шутласа Хĕритун, çĕрĕпе çывăраймарĕ. Пурне те йуратать, пĕрне те йуратмасть. Ирхинĕ кайăк ыйхипе çывăрса кайсан çеç унăн хуйăхĕ лăпланчĕ.

* * *

— Манăн киле кайса килмелле т тет пуçлăхĕ патне кĕрсе Хĕритун тепĕр ирхине.

— Каймастăн.

— Арăмăн кăмаки йăтăнса анма тапратнă та.

— Арăму хăй йусать.

— Арăмăн йăтăнса анать çав.

— Ну, вдом телă? Йусать хăй.Манăн та аннен йăтăнса анма тапратнă та, вара ман кăмака йусасшăнах киле кайаси?.. Йусатăр хăй...

— Сан аннÿ минçе çулта?

— 74-ра.

— Хĕрарăм кăмаки 74 çула çитсен йăтăнмасть вара вăл.

Иккĕн икĕ кăмака çинчен пуплерĕç. Анчах пуçлăх Хĕритунăн йуптаруллă сăмахĕсене тытаймарĕ. Çавах та пулин тăвата кунлăха отпуска йадĕ.

* * *

Хĕритун тепĕр кунхи каçхине киле çитрĕ. Мăн хулхаллă, ула йăтă хирĕç тухса илдĕ: те хĕпĕртесе, савăнса—хÿрипеле сĕртĕнчĕ, унтан Хĕритун çине пăхса—çын ессипе вăл йĕдĕ. Хушка пуçлă, турă лаши—вигеренех палларĕ.

Урăх сасă пулмарĕ, Хĕритуна дысласа, арăм хирĕç тухмарĕ.

— Х-ху, ты, дорт, неушелĕ килте çук?

Пÿрт алăкĕ тулалла, туртрĕ кăна туртмаллах. Анчах хăнкт та сикмерĕ пÿртрен никам дĕнмерĕ.

— Уçха, кардăк! Çывратним?

— Кам унта?

— Ара епĕ, Хĕритун.

— Арăму аптраса çитнĕ. Кунта кĕме йурамасть, пускилелле кайса ларăрха пăртак, терĕ Хĕритуна кăтра пуçлă кушшеркка хирĕç тухса.

Усал тĕлĕк такама та хăратĕ. Вырăн çинчен тăнипе пĕрлех Хĕритун вашкăртрĕ кÿршĕрен килнелле.

— Пулмасть, вилетех пуль санăн арăму, халь те çăмăлланмасть, терĕ каллех кушшеркка хирĕç тухса.

— Х-ху, ты, мошĕт тепĕр виç уйăха дăтма та пултарать?

— Што вы, пайан çăмăлланмасан пурăнма та пултараймасть.

— Иарха, кĕрес еппин, калаçмалли пур.

— Иурамасть.

— Х-ху, ты! ман отпуск вăхăдĕ пĕтет, курмасăрах кайатăп вĕт. Кĕрсе калаха еппин, еп тепре отпуска ки-

лиҫҫен тӑхтатӑр, ан ҫӑмӑлланттӑр.

Кушшерккӑшӑн Хӗритун ухмах ҫын пекех туйӑнҫӗ. Сыпнӑ ку, тесе шутларӗ.

Хӗритун пускилтен кун каҫиҫҫен темиҫе хуҫен те ҫупа-ҫупа каҫрӗ.

— Ҫӑтаймас, тепӗр 20 минут, 10 минут, 5 минут. Ҫӑтаймас, вилетех, тесе хӑратса йарат Хӗритуна йаланах кушшерккӑ.

Хӗриттун отпускӗ виҫӗ кун ҫине карӗ. Анҫах арӑма курман, арӑм ҫӑмӑлланман. Виҫҫӗмӗш кунхине Хӗритун йулашки шухӑшпа пырат.

— Пулҫӗ, терӗ кушшерккӑ хирӗҫ тухса йӑвашшӑн.

— Пулҫӗ?..

Урӑх сӑмах вакламарӗҫ.—Ех, тӗкӗннӗ пурӑнӑҫ. Ма килтӗм, килмен пулсан тен тепӗр виҫӗ уйӑх та пулин пурӑннӑҫҫӗ пуҫ, терӗ те Хӗритун уттарҫӗ тӳрех йалсоветне арӑмӗ вилни ҫинҫен хут ҫыртарма.

— Пулнӑ та пулнӑ, ҫырса парӑрха еппин.

— Сарӑмсӑр вилнине епӗр ҫырма пултараймастпӑр. Сэн малтан тухтӑра, йе милитсийе йевит тумалла, терӗ Хӗритуна йалсовет ҫыруҫи.

Мӗн тӑвас еппин? Иурамас тӑк, йурамас. Хӗритун йалсоветӗнҫен киле тавӑрӑнҫӗ те, пӳрте кӗмесӗрех хушка, турӑ лашана утланса вӗҫтерҫӗ милитси патне, арӑмӗ вилни ҫинҫен йевите.

— Лиҫук ҫӑгаймарӗ, тесе хӑварҫӗ Хӗритун йалхӗрринҫе ларакан хуннӗне кантӑк витӗрех.

— Тата ес ӑҫта кайатӑн?

— Милитсийе.

— Е-е, шуйттан комуниссем, вилсен те ҫынран милитсисемпе ҫӑрмантаратӑр, тесе вӑрҫса йулҫӗ хуннӗ те кантӑк витӗрех.

* * *

Хӗритун пуйан мар, саппасра тӑракан хӑма мӗн ҫук. Ҫавӑнпа та хуннӗ Хӗритун курӑнми пулиҫҫенех тула тухса лашине кӳлсе те хуҫӗ. Вилнӗ ҫынва пытарасах пулат вӗт, темӗн ҫухлӗ йуратӑтӑн пулин те, хамӑр патӑрта усрама ҫук. Хӗритун хуннӗ тупӑк тума хӑмасем тийерӗ те, шакӑлтаттарҫӗ хыҫалти урампа анаталла, хӗрӗ ваҫҫи тупӑк тутарма. Хӑмасене лупас айне тӑкрӗ те пускилсене, хурӑнташсене тупӑк тума ҫӗнме карӗ. Пӳрте кӗрсе те пӑхмарӗ. Ара, мӗнле кӗрен унта, тискер вилӗмпе вилнӗ вӗт, аҫа ҫуратнӑ ҫух!

— Пулнӑ та пулнӑ ӗнтӗ, ҫӗртсе тӑратма ҫук. Пырса тупӑк туса паратӑр пуҫ, терӗ Хӗритунпа йунашар пурӑнакан Кришка патне каҫса.

— Кам ваҫҫи ара? тесе хӑраса ӳкрӗ Кришка.

— Ара Лиҫук ваҫҫи.

— Лиҫук кин паҫӑр ҫеҫ кантӑк умӗнҫе лараҫҫӗҫке, унпала пӗрле пӗр майра пурҫҫӗ.

— Ес ӗнерхине астӑва тӑн пуҫ, Кришка! Айта туса парарах ӗнтӗ.

Кӑнтӑрла ҫитнӗ ҫӗре тупӑка туса та пӗтере пуҫларӗҫ.

Кушшерккӑ тула тухсан, сарайӗнҫе (лупасайӗ) темӗн ӗҫленине ҫылайҫҫен пӑхса таҫӗ. Пӳрте кӗрсен Лиҫука та каласа кӑтартрӗ. Анҫах, тахҫавтанпа лар тутарасшӑн антӑратса пурӑннӑ Лиҫук тупӑк ҫинҫен аса та илмест.

— Ах, спаҫҫипах ку лара тутарттарса хӑварнӑшӑн, тесе ҫеҫ савӑнса ларат.

Хӑритун хуннӗ ҫеҫукпа киле пырса кӗҫӗ. Сарайне тӳрех утса пырса, туса пӗтернӗ хӗресе ҫӗклесе хапха умне, урам йенне тухса тӑратрӗ.

Унтан псалттир вулама пынӑ ҫеҫукпа пӳрт алӑкне йар! уҫса йаҫӗҫ.

— Ҫветтуй турӑ, ҫветтуй хӑват...

Теҫук ҫавӑнтах вырӑн ҫинелле ҫавӑрӑнса анҫӗ. Вӑл «вилнӗ» Лиҫука курнӑ иккен.

— Вилмесӗрех пытаратпӑрӗҫ, ей-айай, терӗ «вилнӗ» хӗрне курсан Хӗритун хунӗ.

Ку вӑхӑтрах тупӑка туса пӗтерсе, пӳрте йатса кӗҫӗҫ. Лиҫукӑн ахаҫ те вӑйӗ пӗтнӗскер, тупӑка курсан, ҫавӑнтах татӑлса анҫӗ- Шавлама тыгăнҫӗҫ. Тупӑка кай пуҫӗнҫен йатса кӗрекен Кришка, Лиҫук мӗнле ӳкнине курайманскер:

— Ан хӑрӑр, хӑш вилен ахаҫ ҫавӑн пек пулат, вил шӑнӑрӗ туртат ӑна, тет.

Ку хушӑра теҫук мӗнле тӳхса тарнине никам та курман. Псалттир кӗнеки те урайнех выртса йулнӑ.

Лиҫука вырӑн ҫине илсе хурса ӑна кӗртрӗҫ. Кун хыҫҫӑн пытарма пынӑ ҫынсем пӗрерӗн-пӗрерӗн саланса пӗтрӗҫ. Тупӑкне: „ватса ҫунтарас“ терӗҫ. Ан-

ҫах Лиҫук асăнмаллăх ҫăнăх хумалли пултăр, тесе кĕлете хуртарҫĕ.

* * *

„Пайан арăма пытаратăп, пĕрик куна кайа йулатăп“, тесе телефонокрам шаплаттарҫĕ Хĕритун, района ҫитнипе пĕрлех, хăйĕн Шупашкарти уҫрештенине. Хĕритунăн Шупашкарти йулташĕсем пăшăлтата-пăшăлтатах Хĕритуна хĕрхенсе илҫĕҫ. Упăшкисĕр пурăнакан стурăшиххă вăл кун пилĕк хут супăҫпе ҫăвăнҫĕ, тет; йулташĕнҫен кивҫен укҫа илсех пите сĕрмелли ҫăнăх кайса илсе, кун каҫҫиҫҫенех сĕрĕнсе ларса, мелник тĕслĕ пулҫĕ, тет.

Районра та Хĕритуна питĕ хĕрхенҫĕҫ. Ҫитмелли ҫĕре ҫитсе ҫапăнса ҫӳрерĕ те, Хĕритун каҫа хирĕҫ аслă милятсипе тухтăра йамшăк лаши ҫинех лартса тухрĕ. Хăй йуланутпа вĕҫтерет малтан, пĕр пар хура лаша ышкăнаӗ кайран. Иурлă-шыв, пылҫăк ҫăлтăрла ҫăваӗ, кĕрхи сив ҫумăр пиг-куҫа ҫапаӗ. Урапа йĕрри нимĕн те йулмасӗ. Каҫ пулҫĕ. Тĕгтĕм, ҫиксе те курăнмасӗ.

Ҫитсе кĕҫĕҫ Хĕритун килне.

— Лиҫа, еси ку?! терĕ тĕлĕнсе Хĕритун пӳрте кĕрсен.

— Шупашкарти терĕним тата?

— Ара, мĕнле капла?

— Ҫаплах, есĕ тепре авланасран хăраса, каллех ҫĕрĕлтĕм вĕт!

Ҫапла вĕлерсе ҫĕртрĕ вара Хĕритун хăйĕн арăмне. Ахалех вăтăрпус разхут турĕ уҫрештенири тăлăх арăма.

Кушшерккăн „пулҫĕ“ тенĕ сăмахĕ—вилнине пĕлтермен, ҫăмăлланнине пĕлтернĕ пулнă. Ҫ. ШĂПҪАК.

## Косшвеймашшин макаҫăнĕнҫе.



— Ку мĕн йапала?

— „Примус“ теҫҫĕ ăна. Вутшанкăсăр апат пĕҫерет.

— Мана ăна мар. Ашсăр аш йашки пĕҫерекеннине пар.

## Писсаттĕлсем хушшинҫе.

Пĕри: Кӳлепи, пайан мĕн туса куна иртертĕн ес?

Тепри: Нимех те тăваймарăм—пĕр 12 пайлă пйессă ҫыртăм, 10 поемă ҫарлаттартăм, 150 сăвă ҫарлаттартăм.

„Сунтал“ ҫекреттарĕ (кĕгесрен): Еп те ҫарлаттартăм... сан поемусене—вĕсене ҫарлаттарма ҫырассинҫен те сахал вăхăт кирлĕ пулҫĕ. К.

## Науккăпа пурнăҫ.

— Мĕн ĕҫпе пурнатăн?

— Спортпа.

— Пиҫу тата кам?

— Ҫăваш артисĕ.

— Тепĕр пиҫу?

— Ҫăваш писсаттĕлĕ.

— Аҫу?

— Епĕр выҫă вилесрен иртен пуҫласа каҫҫен атă ҫĕлесе лараӗ.

## Урокра.

Уҫитлĕ. Пĕр копперативв претҫетаттĕлĕ отҫот тунă. Отҫот тăрăх, кассăра пĕлтĕр 2301 тенкĕ пулнă, кăҫал татах 700 тенкĕ хушăннă. Пĕтĕмпе миҫе тенкĕ пулнă отҫот умĕн кассăра?

Вĕренекен. 1 пин тенкĕ.

Уҫитлĕ. Апла марҫке.

Вĕренекен. Ҫаплах. Отҫотрине кам ĕненет ăна.

## Кућтпоххот вăхăтĕнђе.



— Тарйе, хут пĕлетĕни есĕ?

— Пĕлеп, хут шурă вăл.

— Çук, хут пĕлетни? Хут!

— Ара, хут тата сарри, хĕрли кăвакки те пулаť.

## Кућттурă хуйхă кăтартни.

Ак есĕр калаттăр «кућттурă» теттĕр, ăна тумалла мар, кăна тумалла мар, лешне тумалла мар... Кама усă кÿреттĕрха есĕр вăл сăмахсемпе? Сирĕнпе епĕ тавлашса тăрса çиенелле тухас теместĕп. Кућттурă вăл çак арăм çĕлесе панă кĕпе пекех кирлĕ. Шкул унта, урамсенђе електритсă, ратио йурланисене итлесе ларма пит аван. Ие калăпăр трактăр. Тракгăр усăллине пĕлетĕп. Укçа, укçа çукĕçке ăна илмешкĕн.

— Çапла! Хăвах калатăн—кућттурă усăллă.

— Анђах... тăхтаха ес, мана каласа пĕтерме парха. Ăçта мĕнле йапала кирлине пĕлес пулаť. Есĕр вумайĕшшĕн пит тав тăвагпăр сире. Анђах, сăмахран, пирĕн йалта çакăн пек йапала пулђĕ. Пит çилевмелле ун пирки... Хресђенсем пит ÿпкелеççĕ.

— Пĕрпĕр йĕркесĕрлĕх тупăнђĕ пућ? Волоккитă?

— Мĕнле калас? Ак мĕнле ĕç пулђĕ. Пирĕн йалтан Хиркассине 4 çухрăм, Лешкас йалне 10 çухрăм. Иураť! Пурăнаттăмăр лайăх. Пĕр вăхăтра кућттурă çинђен калакан тоќлатђĕксем килкелерĕç те тепĕр çулне Лешкас йалне пућнитсă уçса пађĕç. Мĕн шухăшлаттăр есĕр кraштăнсем? Пућнитсă уçсан Хиркассинђи йумăçа тем сăлтавĕпе тĕрмене кайса хупрĕç. Ђирлĕ çынна, ђĕртес вырăнне, вĕлерсе пăрахни унта... Темшĕн.

— Такçанах çапла кирлĕ!..

— Сирĕншĕн „çапла кирлĕ те“, пирĕншĕн апла мар çав. Халĕ ђирлесен, 3 çухрăмра пурнакан йумăç патне кайас вырăнне, 10 çухрăмра ларакан пућнитса каймалла. Кайма вуннă, килме вуннă—пурĕ çирĕм çухрăм пулђĕ. Лашу ывăнаť. Ак кућттурă усси! Хресђене мĕнле йапала кирлине пĕлес пулаť çав, а есĕр „кућттурă“ теттĕр... терĕ çилленсе çын.

---

## Туй йурри.

Пирĕн йысна пулăçă,
Пулă тытма йуратаť.
Копператтив пуллине
Çын сисиђђен пушатаť.
Пирĕн кукки милитси
Самакунпа кĕрешет:
Кашни талăк хушшинђе
Ђетвĕрт ĕçсе пĕтерет.
Пирĕн пиђђе кайăкçă
Кайăк тытма йуратаť:
Асанненĕн ђăххине
Пусса çиме каçхине. С а в — й.

# Мунђа ăстисем.

Нĕркеçри (Патĕрйел р.) çамрăксем хăтланăи.

Каç пулса çĕр тĕттĕмленсе çитсенех Анаткас урамне лăри-лари, хăрăлтатакан саслă тађйанккă асаплама тытăнђĕ. Купăс хыççăн йешĕл кăна çамрăк ађасем хăйсен сассисене ĕнерсе мăрăлтатса пыраççĕ.

— Епи-ир кайма-аннине-е кам каайас, тесе хыттăн йурă пуçласа йађĕç.

— Шур кăвакал ђĕпĕ (ай) кăларнă,

Атăл тăрăх йухса çӳреме.
Пире атте-анне (ай) çуратнă
Тĕнђе-е тăрă-ă-ох!.. йĕрсе те
çӳре-еме.

Купăсĕ: ан-нăллин нат-на-ат, лакăртăк хăр-ха-ăр хар,—турĕ.

Кивĕ йурă. Ку йурра 14 çул кайалла патша вăрçинђе ђăнах та пуçĕсене хурса хăварма кайакансем йурлађђĕç. Анђах, ку йурра хађ йурлакансем кивĕ пурнăçăн сĕрĕмне шăршласа курман. Ĕлĕкхи салтак пурнăçне те ватă салтаксен сăмахĕнђен кăна пĕлеççĕ. Вĕсем йурлакан йурă та ватă салтаксенђен, кăмака шăтăкне манса йулнă çĕтĕк алса тулĕ пек кăна кивелсе йулнă. Иурлаççĕ ăна вĕсем. Иурлаççĕ те, хăйсене хăйсем:

— Епĕр кăна салтака кайатпăр. Нĕркеç халђен пирĕн пек никрут курманха, тесе шухăшлама хăйаççĕ. Анђах, ашшĕсем те кайнă та вĕт, мĕн тăвас тен есĕ вĕсемпе.

Купăс калаканни хăрăлти пасĕсем çине хытăрах пусат̆.—«Илђĕр хĕрсем ман купăс сассине»,—тет пуђ.

Урамра хĕрсем çук. Улах ларма пуçламанха. Улах мунђисем (ку йалта улаха мунђасенђе лараççĕ) пушах. Купăспа урам тăрăх кăшкăрашса çӳрекен ађасене йытăсем çеç хапха айĕнђен вĕрсе йулаççĕ. Хĕрсем çывăраççĕ, йăвăр ĕç пусарнă вĕсене.

Анђах, мĕн ĕçлесе кĕрхи вăрăм çĕре иртерес. Мĕн те пулсан тăвас пулат̆ вĕт. Вуламалли çурт, хĕрлĕ кĕтес таврашĕ çук. Пахђасенђе хăйар-çарăк сайраланнă (кукăрăлса выртакан, çăмлă хăйар ассишĕн карта урлă каçса йĕм çурни те харам). Иаланах йурласа çӳресен те карланкă ыратат̆. Иулашкинђен:

— Кăвак кăвакарђăн (ай) вĕçнĕ ђух,
Кунĕ-çĕрĕ тĕтрелле пулайђĕ.
Епирех (те) ӳссе (ай) çитнĕ ђух,
Саманисем!.. йăвă-ăр киле-ейђĕç.
Ах, мĕн тăвас, турă çырнине!
Хамăра турă-ох! çапла та çырнă пуђ,

тесе йурă пĕтсе ларђĕ. Унтан, ђылай тăрсан, ахăлтатса, каçса кайса темĕскертен кулђĕç те, кĕрхи тĕттĕм çантăлăк лăпланђĕ. Нумай йăвăр самана курнă ватă салтак çĕтĕк ђăпта айĕнђен пуçне кăларђĕ те:

— «Самана йăвăр» пулнă хађ... Ех, сĕт тутисем!.. Кăтартасђĕ сире ĕлĕкхине... «Турă çырнă»... ђфу!—терĕ те тепĕр йеннелле çаврăнса выртрĕ.

Ку каçхи ĕç çинђен çырмалли те пĕтрĕ. Анђах, ирхине çут çанталăкпа ӳкĕте кĕмен автăршăн ĕнерхи каçăн ĕçĕсем тупăнаççĕ.

Нĕркеç çамрăкĕсем Иелӳç Унисĕм мунђине ак çапла туса хăварнă:



Çамрăксем Унисĕме йара кунлăх ĕç тупса паđĕç. Мекĕрлене-мекĕрлене тӳрлетрĕ Унисĕм мунђине. ЕТМЕН А.

## Пушшипе тулли.

— Мĕншĕн сирĕн копперативтив лавкки пушă?

— Уншăн пирĕн копператтив претçетаттĕлĕ тулли.

— — —

Револђутси пулни 11 çул çитет, çапах та халĕ те çĕр сугне кайнă ђухне çултахăк çурăллăх çăкăр ђикме манакансем пулаççĕ.

# Ҫейе ҫын.

Нумай пулаҫ Упрам Упрамăвиҫ ҫемйи шурă ҫăвăх курманни. Шуррине мар, хура ҫăкăрне те кас-кас Коркоп лавкки умĕнҫе ир пырса каҫҫен арăмĕ ылмат ҫерет йышăнса тăнипе ҫеҫ илнисем те пулнă. Темĕншĕн кăҫал Коркоп хăй ҫленĕсене тăранах ҫитересшĕн пулмарĕ,—шурă ҫăкăр тĕлĕшĕнҫен мар, хура ҫăкăр тĕлĕшĕнҫен те пит хĕсĕк пулҫĕ, ҫерет «хŷри» 130 йытă хŷринҫен кайа пулман ҫу каҫиҫҫенех. Ĕҫкĕ тĕлĕшĕнҫен, славă поху, Коркоп антратмарĕ вара; ҫутти те, хĕрли те, сăри те, саккуски те ытлашшипех пулҫĕ: саккускинҫен пĕве туса, ĕҫмеллисемпе тултарса, пăрахутпа ишсе ҫŷреме те ҫитмелле; гата ҫитменнине ку йапаласене ҫеретсĕрех парса тăҫĕҫ. Ĕҫкин палла-палла „ырлăхĕсем» ҫылайах курăнҫĕҫ, вĕсем кăҫалхи тишкерŷ кампанинҫе ҫăн хисеплĕ вырăн йышăнса тăҫĕҫ. Ку йенҫен Упрам Упрамăҫ та Коркоп ҫине пĕртте кŷренмест, пĕр шурă ҫăнăх паманни анҫах ăна тарăхтараҫ. Хăйшĕн пулсан пит тарăхмĕҫҫĕ Упрам Упрамăҫ,—вăл мушикрен тухнă совҫиновнĕк, унăн хырăмĕ шурă ҫимĕҫсĕр те аптрамасҫ, анҫах унăн «мамăҫки» хула ҫынни, тата ҫамрăк аҫисем те пур. «Мамăҫки» тахҫантанпах пелмен (хуран куккăлĕсем) тăвассине асăнаҫ, кашни кунах йанăраҫ ҫак ыйту пирки, анҫах шурă ҫăнăх ҫукки хуплаҫ. Коркоп ĕлĕкхи пек ҫлен кĕнекисемпе пами пулҫĕ шурă ҫăнăх, ҫирлĕ аҫасемпе вар витипе аптăранă ҫынсене анҫах тухтăртан хут илсен параҫ пăртак-пăртак. Упрам Упрамăҫăн пĕтĕм ҫемйи сывă. Мĕнле май тупасши ҫăнăх туйанма, унсăрăн канăҫ памасҫ арăм?

Хăйне варвитти йертесшĕн, Упрам Упрамăҫ ҫĕрĕ пăрҫа ҫисе пăхаҫ, йŷҫĕхнĕ сĕтрен уйран туса ĕҫсе те пăхаҫ, пĕрре выҫă-варла труках икĕ теҫҫатка хăйар та ҫисе пăхрĕ, пасарта сутакан вĕретмен шывпа тунă кăваса та ҫетвĕрҫĕ-ҫетвĕрҫĕпе ĕҫсе пăхаҫ, анҫах нийепле варвитти йермест. Ҫук варвитти, палли те ҫук.

Нумай тăмарĕ, унăн телейĕ урăх йенҫен сиксе тухрĕ. Пĕрре, Коркоп лавкки умĕнҫе ҫăкăр ҫеретне вăрах кĕтсе выртнипе, Упрам Упрамăҫăн вар ыратма тапратнă. Акă савăнса кайрĕ Упрам Упрамҫă: славă поху тин ҫеҫ варвитти йерет иккен, тет вăл ăшĕнҫе.

Ҫак шухăшпа сиксе тăраҫ те вăл, ҫеретне пăрахсах ҫупаҫ пуҫнитсăна тухтăр патне. Ҫитрĕ пуҫнитсăна, кĕрет пĕр тухтăр капинетне пĕкĕрлсе кайса, варне икĕ аллипе тытса.

— О-о-о-о-й! О-о-о-о-й! Вилетĕп, хоспотин т о к т ă р, пошалстă пулăшсам! О-о-о-о-й!—тет Упрам Упрамăҫ куҫĕсене ҫарса пăрахса.

— Мĕн пулҫĕ тата? тет тухтăр.

— Ой! О-о-о-о-й! Варвитти вĕлерет... Хĕрĕх кун хĕрĕх ҫĕр... Оооой! Пиҫке пăккинҫен пĕрĕхнĕ пек пĕрĕх.... О-о-о-й! Вилет-ĕ-ĕ-ĕ-ĕ п! тет татах Упрам Упрамăҫ.

— А-а-а-а... Санăн варвитти иккен. Ҫиҫҫас пулăшăпăр. Ме кай ҫак хутпа Коркопа,—тесе ҫырса параҫ ăна тухтăр пĕр хут татăкĕ. Вĕҫтерет ку хута илсе Упрам Упрамăҫ Коркоп правленине. Ҫитрĕ хашкаса. Кунта халăх вĕҫĕ-хĕрри ҫук нумай пухăннă, пурте тухтăр панă хутсемпе килнĕ. Коркоп пуҫлăхĕ лараҫ сĕтел хушшинҫе, умĕнҫе пĕр витре ҫернил лараҫ. Вăл руҫкине витрене пуҫса илет те, кама мĕн ҫухлĕ шурă ҫăнăх памалли ресоҫутси ҫырса параҫ. Кунта ҫăнах та ҫернил витрепех тытмалла. Кашни кун ку тери халăх ҫăнăхшăн пуҫтарăнсан, ҫернил сахалах кирлĕ пулмĕ. Ҫерет ҫитрĕ Упрам Упрамăҫа. Пуҫлăх кун аллинҫи хута илҫĕ те,—«отпустить четыре кило белый муки первого сорта»—тесе ҫырса хураҫ хуҫĕ ҫŷлти кĕтессине, унтан айаларах пиҫет лапплаттарса пусса хуҫĕ.

Ку хута илет те, вĕҫтерет Упрам Упрамăҫ Коркопăн ҫăнăх макаҫăнне. Кунта ҫерет хŷрин вĕҫĕ те курăнмасҫ. Виҫсе турттарса ĕлкĕреймест ҫăнăхне прикашҫĕкĕ. Пурте илеҫҫĕ ҫăнăх тухтăр хуҫĕсемпе. Илекеннисем такам та пуртăр: копператтив ҫленĕсем те, усламҫăсем те, пуп майрисем те, йалтан килнĕ мушиксем те курăнаҫҫĕ.

Тин ҫеҫ сисрĕ Упрам Упрамăҫ шурă ҫăнăх йепле майпа туйанмаллине. Ҫак кунтан вара Упрам Упрамăҫ «мамăҫки» кашни кунах шурă ҫимĕҫ пĕҫерет, упăшкипе те пĕртте хархашмасҫ.

ТИМКИ.

# Вӑррисене тупасшӑн тӑрӑшман уђитлӗ.

Уђакасси (Вӑрнар рай.) йалӗ пулас шкул пӗренисене вӑрласа пӗтернӗ. Уђитли ӑҫта пулнӑши?




**У ђ и т л ӗ: Ӑҫта кайса кӗђӗҫ ку пӗренесем?.. Автан, есӗ вӑрламарӑни?..**

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 1162. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 2200